28-мĕш ӳлĕ тухать. Хаçĕ 20 пуç.

1945
ОКТЯБРЬ
2
ЫТЛАРИКУН
191(6942)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Марксизм-ленинизм теорине ывăхма пĕлмесĕр вĕренсе пымалла

Марксизм-ленинизм теорийĕн пурнăçри вăйне кучухнехи историн пĕтĕм аталанăвĕнче тĕрĕслесе тухнă. Пирĕн историлĕ саманара общество аталанăвĕн олычĕ, рабочи класăн гениллĕ çулпуçĕскине—Ленинпа Сталина марксизма малалла аталантарма тата çĕнĕ открытисемпе, çĕнĕ выводсемпе пуянлатма май панăскер, наукăллă социализмăн вилĕмсĕр тĕрĕслĕхне кăтартса пачĕ. Совет çĕршывĕнче этемлĕх историйĕнче малтанхи хут социализм туса хунă. Марксизм-ленинизм идейисем, массăсене çăвăрса илсе, материаллĕ хăватлă вăй пулса тăчĕç.

Теори массăсене организацилекен тата мобилизацилекен выран йышăнса тăнине Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсем тарăхăн çирĕплетсе пачĕç. Фашистла агрессорсене политикăпа вăрçă тата экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтернишĕн совет халăхĕ большевиксен партине, аслă ученăй тата гениллĕ полководеца Сталин юлташа тав тума тивĕçлĕ.

Марса çакна кăтартса пачĕ: Совет государствăн кадрĕсем, марксизм-ленинизма, общество аталанăвĕн законĕсем çинчен вĕрентекен наукăна вĕренсе алла илсен, пысăк та кăткăс задачăсене тата çăмăллăн татса пама пултараççĕ Марксизм-ленинизм тĕлĕшĕнчи тĕп пĕлӳсен энциклопедийĕ—«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тухнăранпа партăн çичĕ çул хушшинче пирĕн партă туса çыннине организацилĕ ĕçпе воспитлăн ĕçĕ çав тери пысăк выран йышăнса тăнине кăтартса пачĕ вăрçă. ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ партине совет кадрĕсене, пирĕн мĕнпур интеллигенцине идея тĕлĕшĕнчен вĕрентсе пиçĕхтерес ĕçре пысăк выран йышăнчĕ. Пирĕн интеллигенци вăрçă çулĕсенче Совет çĕршывĕнчи рабочисемпе хресченсене ертсе пыракан пулăшу парса тăчĕ. Пирĕн партă вăрçăччен те, çавăн пекех вăрçă вăхăтĕнче те куллен туса пынă пропаганда ĕçĕ пирĕн кадрсене вăрçа вăхăтĕнчи чи йывăр задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшрĕ.

Марксизм-ленинизм теорине ывăнма пĕлмесĕр вĕренсе пырасси — пирĕн мĕнпур интеллигенцин таса тивĕçĕ пулса тăрать. Марксизм-ленинизм вăл — ĕмĕрех аталанса, малалла пыракан теористкăллă наука: вăл общество аталанăвĕн çĕнĕ опычĕпе тăтăшах пуянланса пырать. Унăн положенийĕсене ĕмĕрлĕхе юрăхлă догмăсем туса хума çук, вĕсене ыт «хальтен вĕренсе механически усă курма çук. Пирĕн наука вăл—пĕтĕм вырăс культурин тата тĕнче культурин çуллĕ тупи пулса тăрать. Вăл этемлĕх шухăшĕ нумай ĕмĕрсем хушшинчи историллĕ аталанура пухнă çитĕнӳсене пĕтĕстерсе тăрать.

«Хăван ăс-пуçна этемлĕх куçаранчен туса çитерлĕ мĕнпур пуянлăхсене пĕлнипе пуянлатсан çеç—коммунист пулма пулать»,—теннĕ Ленин çирĕм пилĕк çул каярах комсомолăн III-мĕш съездĕнче валаннă хăйĕн сăмахĕнче. (Ленин соч., XXV т., 388 стр.).

Рабочисăн теорилле пĕлĕвĕ мĕн чухлĕ çулĕрех тăрать, вăл идея тĕлĕшĕнчен малалла ӳсес енĕпе хăйĕнчен хăй çавăн чухлĕ ытларах мĕтмалла. Марксизм-ленинизм теорине никам та ăланлăхах вĕренсе çитерлĕ тесе калама пултараймасть. Общество пурнăçĕ тăтăшах малалла кайать, унпа пĕрлех пирĕн теори те малалла пырать. Кая юлни, пĕр вырăнта шăнса ларни,—çакă вăл «деляга», политикăлла обывателя пулса каяссине пĕлтерет, çакă вăл çĕнĕлĕх туйăмне—большевикăн чи хаклă туйăмне çухатассине пĕлтерет.

Халĕ, мирлĕ аталану тапхăрĕнче ертсе пыракан совет кадрĕсем умне тухса тăнă аслă задачăсем вĕсене общество аталанăвĕн законĕсене пĕлсе тăма хушаççĕ. Вăрçă çулĕсенче партине советăн ĕçне, çарна культура ĕçне çĕнĕ кадрсем йышăнăн хутшăнчĕç. Вĕсем теорие куллен çине тăрса вĕренсе пыни кирлĕ. Çакă вăл пуринчен малтан парти членĕсемпе кандидачĕсене пырса тивет. ВКП(б) уставĕ вĕсене хăйсен ăланулăхне ӳстерес тĕлĕшпе, марксизм-ленинизм никĕсĕсене вĕренсе алла илес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме хушать. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче партине çĕнĕрен икĕ миллион çын ытла хутшăнчĕ. Çаксем вĕсем—çĕршывăн политикăллă активĕ. Совет государствине малта пыракан çыннисем пулса тăрассĕ. Вĕсем марксизм-ленинизм теорийĕн никĕсĕсене вĕренсе алла илме тивĕçлĕ.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тухнăранпа парти организацийĕсем пропаганда ĕçĕн пысăк опытне туянчĕç. Пропаганда работникĕсен задачи—çак опыта пĕтĕстересси, ăна мĕнпур парторганизацисем хушшинче сарасси пулса тăрать. Марксизм-ленинизма вĕренмелли тĕп меслет—марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» харпăрхăй тĕлĕн вуласа вĕренесси пулса тăрать. Çакăсен теорилле вĕренĕвĕн ытти тĕрлĕ пур формисем те—парти шкулĕсенче вĕренесси, кружоксене хутшăнса ĕçлесси, лекцисем итлесси, калаçусемпе конференцисем иртересси,—çаксем пурте тĕп вĕренĕве пулăшакан формăсем пулса тăнине пĕр минутлăха та манмалла мар. Кĕнекепе харпăрхăй тĕллĕн тимлĕн ĕçлесе вĕренинне кружокăн нимĕнле руководителĕ те, нимĕнле лектор та улăштарма пултараймасть. Вĕсем теорин кăткăс ыйтăвĕсене çутатса парас ĕçре пулăшма, шухăша вĕренекен темăн тĕп ыйтăвĕсем тăрăх йĕркелесе пынă çĕрте пулăшма кăна пултараççĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ пĕр хутчен мар çакна кăтартса панă: пичет марксизмпа ленинизма вĕрентес ĕçре татса паркан тĕп выран йышăнса тăрать, çав вăхăтрах сăмах вĕççĕн туса пыракан пропаганда пулăшакан выран йышăнса тăма тивĕçлĕ. Республикăсемпе облаçсенче туса тăракан хаçатсен çакна ăнланса илес пулать: вĕсен тивĕçĕ—пирĕн кадрсене марксизм-ленинизм теорине вĕренес ĕçре ывăнма пĕлмесĕр пулăшса тăрасси пулса тăрать. Хаçатсенче чи лайăх пропагандистсен лекцийĕсене, консультацисене, теори ыйтăвĕсем тăрăх çырнă статьясене тăтăшах пичетлесе пымалла.

Марксизм-ленинизм теорийĕн никĕсĕсене ĕççыннисен анлă массисене вĕрентесси çинчен те манма юрамасть. Вăрçă çулĕсенче Хĕрлĕ Çарта, промышленноçра, колхозсенче çав тери йышлă актив ӳссе çитнĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем, рабочисем, колхозниксем ССР Союзĕн тулашри тата шалти политикипе çав тери интересленеççĕ. Вĕсем пирĕн çĕршыв малалла мĕнле аталанасси çинчен пĕлесшĕн. Вĕсене коммунизмăн малалла кайманлли çулйĕрне çутатса памалла. Çав ĕçĕн тĕп никĕсне «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренессине хывмалла. Çав çынсене парти шкулĕсемпе политшкулсене явăçтарса, вĕсем валли ăнланмалла массăллă лекцисем организацилесе тата ытти çавăн пек ĕçсем туса анлă пулăшу парас пулать.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне», Ленинпа Сталинăн ĕçĕсене, Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине тĕплĕн вĕренни пирĕн кадрсене теорилле пĕлӳ парать, хăйсен мировоззрине çитĕнтерме пулăшать, партин аслă çулпуçĕсен пурнăçĕне ĕçĕсен примерĕ тăрăх большевикла ертсе пырас ĕçĕн искусствине вĕренме пулăшать.

Совет государствине малалла ӳстерсе чечеклентермелли, унăн экономикăллă хăватне тĕреклетмелли тата хамăран культурăна чечеклентермелли май вăл—ертсе пыракан кадрсене марксистла-ленинла революцилле теорине пĕлнипе хĕçпăаллантарни пулса тăрать. «Çакна аксиома выранех йышăнмалла,—терĕ Сталин юлташ партин XVIII-мĕш съездĕнче:—государство тата парти ĕçĕн кирек хăш отраслĕнчи работникĕсен те политикăллă пĕлĕвĕ тата марксистла-ленинла ăнланулăхĕ мĕн чухлĕ çуллĕрех, ĕç хăй те çавăн чухлĕ çуллĕрех тата ăнăçлăрах, ĕçĕн результачĕсем те çавăн чухлĕ пысăкрах». Ленинпа Сталин идейисен ялавĕпе пирĕн çĕршыв çĕнтерсе пынă тата çĕнтерсе пырать те, Ленинпа Сталин идейисен ялавĕпе совет халăхĕ мирлĕ аталану тапхăрĕнче çĕнĕрен аслă çĕнтерӳсем тăвĕ.

(«Правда», октябрĕн 1-мĕшĕнчи умстатья).

ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ

ВЦСПС Президиумĕ кăçал ноябрь уйăхĕнче ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумне пухма йышăннă. Пленум çак ыйтусене сӳтсе-явмалла: рабочисемпе служащисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене тивĕстерес тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен (докладчик—З. В. Кузнецов юлташ); рабочисемпе служащисене сыватас тата кантарас ĕçе организацилес тĕлĕшпе профсоюзсен ĕçне лайăхлатасси çинчен (докладчик—Б. Я. Сидоренко юлташ); профсоюзсен культурăпа массăллă ĕçне лайăхлатасси çинчен (докладчик—П. В. Попов юлташ).

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ЕÇ ОКТЯБРЕН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă панă
1. Вăрнар	92,6
2. Сĕнтĕр	78,7
3. Советски	78,3
4. Муркаш	76,6
5. Чурачăк	74,3
6. Сĕнтĕрвăрри	72,9
7. Шупашкар	72,6
8. Етĕрне	72,5
9. Çĕрпӳ	71,0
10. Красноармейски	70,5
11. Вăрмар	70,5
12. Шăхасан	68,6
13. Октябрьски	67,5
14. Калинино	66,6
15. Пăрачкав	65,1
16. Элĕк	63,4
17. Ишлей	62,9
18. Куславкка	61,4
19. Первомайски	60,7
20. Йĕпреç	60,4
21. Чкаловски	59,1
22. Елчĕк	58,8
23. Канаш	57,7
24. Комсомольски	57,0
25. Шăмăршă	52,8
26. Улатăр	52,5
27. Çĕмĕрле	50,5
28. Тăвай	48,5
29. Хĕрлĕ Чутай	46,1
30. Кувакино	37,1

Государство умĕнчи пур парăмсене те татнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 12 колхоз тултарнă. «Çĕнĕ ял» Чапаев тата Ильич ячĕсемпе тăракан колхозсем государство обязательстви тăрăх тырă, çĕрулми выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене 1945 çулăн пĕтĕмпех парса татăнă. Паян-ыран çак колхозсем авăн çапса пĕтереççĕ.

А. НИКОЛАЕВ.

Государствăна йĕтĕн вăрри парар

Правительство кăтартнă тăрăх государствăна памалли йĕтĕн вăррине çуррине сентябрь уйăхĕнче памалла. Анчах та чылай районсенче йĕтĕн вăрри парас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Кувакино районĕнче 28 колхозра йĕтĕн акнă, çак вăхăта çитсе пĕр колхоз та государствăна йĕтĕн вăрри паман. Улатăр районĕнчи йĕтĕн акакан 29 колхозран 3 колхоз кăна государствăна йĕтĕн вăрри парса татнă. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне районĕсенчи колхозсем те государство умĕнче парăмлă.

Йĕтĕн вăрринне хатĕрлес ĕç çакăн пек начар пыни колхоз руководителĕсем ответлăха туйса ĕçлеменнинчен тата район руководителĕсем колхозсене кирлĕ пек контроллесе тăманнинчен килет. Район руководителĕсем йĕтĕн вăрри хатĕрлес ĕçе ертсе пырсан, ĕç ăнăçлăн пырать. Сăмахран, Вăрнар районĕнчи колхозсем йĕтĕн вăрри памалли çулталăкри плана 80 процент ытла тултарнă.

Йĕтĕн вăрри хатĕрлесси—паян тумалли ĕç, ăна халех пурнăçа кĕртессишĕн кашни колхозрах пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Çĕрулмипе пахчаçимĕçсене хăвăртрах пуçтарса илер

КУСЛАВККА. Комбинатри подсобнăй хуçалăх (начальникĕ Е. Цыганова) çулсеренех вăйлă тырпул тата çĕрулмипе пахчаçимĕç туса илет. Подсобнăй хуçалăхăн пурĕ 220 гектар çĕр пур. Çак çĕр лаптăкĕ çинче 70 гектар çĕрулми, 64 гектар тĕттирă тата 32 гектар тĕрлĕ пахчаçимĕç акса хăварнă. Пухса кĕртнĕ тырра подсобнăй хуçалăх сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлнех çапса пĕтернĕ, обязательство тăрăх государствăна 4.000 пăт тырă панă. Подсобнăй хуçалăхра ĕçлекенсене пурне те общежитие вырнаçтарнă тата столовăйра виçĕ хутчен вĕри апат çитереççĕ. Пухса илнĕ çĕрулмипе пахчаçимĕçе хĕлле сыхласа усрама 600 тонна çĕрулми вырнаçмалăх 2 овощехранилище тата 200 тонна купăста хумалăх каткасем хатĕрленĕ.

Халĕ çĕрулми кăлараççĕ тата пахчаçимĕç пухса кĕртеççĕ. Анчах халĕ пурĕ те 3 гектар çĕрулми çеç кăларнă. Комбинат директорĕ Эскин юлташ подсобнăй хуçалăх ĕçĕпе пачах та интересленмест. унта ĕçлеме ĕç вăйне мобилизапилессишĕн тăрăшмасть.

Октябрь уйăхĕ—çĕрулмипе пахчаçимĕç пухса кĕртмелли чи хĕрӳлĕ тапхăр. Совхоза та комбинатăн ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ улшăну тумалла.

Парăмсене татнă

Первомайски районри «Красное Имение» колхоз государствăна 1945 çулăн тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç тата ашкакай парса татрĕ.

ВКП(б) райкомĕн пленумĕ

ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн юлашки пленумĕнче районри колхозсем государствăна тырă парас тата ялхуçалăх ĕçĕсен планне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçлани çинчен тата июнĕн 1-мĕшпе сентябрĕн 25-мĕшĕ хушшинче парти ретне илес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явнă. Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Вахнин юлташ тунă докладран тата пренире тухса калаçнисенчен çакă паллă пулчĕ:

Районри чылай колхозсем партине правительство ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе йышăннă решенисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырса, ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтерес тата государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Районри колхозсем сентябрĕн 20-мĕшĕнче тырă вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 14-мĕшĕнче кĕрхи тырăсем акмалли плана тултарнă. Районра 12 колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

Государствăна тырă парас тата тырпула пухса кĕртес ĕçре Киров ячĕпе тăракан, «Новая деревня», «Труд», «Власть труда», «Заря», Ольтикасси ял Советне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те малта пыраççĕ.

Çав вăхăтрах пур колхозсем те ку тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлесе пымаççĕ-ха. Сăмахран, «Красная звезда», «Красный Волгарь», «Знамя революции» колхозсем тата районри МТС ялхуçалăх ĕçĕсене вăрçă тата государствăна тырă парас енĕпе калама çук япăх ĕçлеççĕ. Савна тула сентябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне район планăн хывас плана 73 процент, аван çапассине—56 процент кăна тултарнă.

Государствăна тырă парас хăвăртлăха район чакарнăçемĕн чакарса пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парас плана 70 процент кăна тултарнă. «Знамя революции», «Красный Волгарь» тата Новинскри колхозсем тырă парас плана пурĕ те 20—40 процент çеç тултарнă. Новинскри колхоз (председателĕ коммунист Муравьев) 17 талăк хушши ĕнтĕ государствăна пĕр килограмм тырă та паман. Хăй япăх ĕçленипе Муравьев юлташ «пиçĕн халăх питĕ усă мар, нимĕн тусан та итлемест», тесе сӳлĕтнипе сирсе ярасшăн.

Сĕнтĕрвăрри хули колхозĕнче государствăна тырă памалли воскресникре вичĕ кун хушши хатĕрленнĕ пулин те, воскресникре хатĕрлев пунктне пĕр пĕрчĕ тырă та леçсе паман.

Уйрăмăнах пленумра МТС ĕçне хытă критикленĕ. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ япăх ĕçлет: суханламалли тулталăкри планăн 72 процент, комбайнсемпе тырă вырмалли плана 77 процент, аван çапмалли плана 11 процент кăна тултарнă. МТС директорĕ Ижутов, парторганизаци секретарĕ Федотов ĕçе большевикла организацилес енĕпе нимĕн те тумаççĕ. МТС директорĕ ĕçе ертсе пырас вырăнне, тĕрлĕ япаласем турттарса çӳреме пуçланă.

МТС-ра ĕç дисциплини çав тери янăх. Хăшпĕр бригадирсем(Григорьев, Соколов) ĕçе тухмасăр пурăнаççĕ. Григорьев бригадир хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче никамран пытмасăрах Хусана тухса кайнă та, пĕр эрне хушши çухалса пурăннă.

Иккĕмĕш ыйтупа пленум иртнĕ тăватă уйăх хушшинче парти ретне илес ĕç мĕнле пыни çинчен — Воронков юлташ докладне сӳтсе-яврĕ. Ку ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пурри палăрчĕ.

Иртнĕ тăватă уйăх хушшинче парти ретне районра пĕтĕмпе те 16 çын члена, 7 çын кандидата кĕнĕ.

Районри 18 пуçламăш организаци парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Пуринчен ытла парти ретне производствăри рабочисемпе колхозниксене тата комсомолсене илес ĕç япăх пырать. Июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ку тарана çитсе те парти ретне 4 рабочие, 5 колхознике, августпа сентябрь уйăхĕнче 2 комсомолеца кăна илнĕ. МТС-ри, райпромкомбинатри, «Портной» артельри, Кĕçĕн Маклашкинăри тата Астакасси, Макаç, Сĕнтĕрпуç ял Советĕсем çумĕнчи парти организацийĕсем çĕнĕрен членсемпе кандидатсем илес тĕлĕшпе пачах та ĕçлемен.

Партин хăшпĕр пуçламăш организацийĕсенче парти пухăвĕсем вăхăтра пухăнмаççĕ, пухусене ирттерме тивĕçлипе хатĕрленмеççĕ, йышăннă решенисем пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Çамрăк коммунистсене политикăллă воспитани парас ĕçе япăх организациленĕ. Районра 51 кандидатăн кандидатра тăмалли вăхăт иртсе кайнă.

Районри коммунистсемпе комсомолецсем хушшинче Ленин—Сталин партийĕн теорине вĕрентессине организацилемен, лекцисемпе докладсем пачах та пулмаççĕ. ВКП(б) райкомĕн парткабинечĕ çумĕнчи лекторсен группи ĕçлемест. ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн завелующийĕпе парткабинет заведующийĕ те çук. ВКП(б) райкомĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарĕсене пĕр хут та пухса ирттермен. Политшкулсемпе ВКП(б) историне вĕренмелли кружоксем те ĕçлемеççĕ.

Пленум куçĕ йĕркинчи ыйтăсăр тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Совет Союзĕн Маршалĕ А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ янă салам

Совет Союзĕн Маршалне А. М. Василевский юлташа

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире, Хĕрлĕ Çăран чи паллă полководецĕсенчен тата Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйăсен талантлă организаторĕсенчен пĕрне, Эсир аллă çул тултарнă кун салам ярасçĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Сире хамăр Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн малалла та усăллă ĕçлеме сывлăхпа вăй-хал сунаççĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне А. М. Василевский юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Совет Союзĕн Маршалĕ **А. М. Василевский** юлташ 50 çул тултарнă май Александр Михайлович **Василевский** юлтата вăл государствăна Хĕрлĕ Çăршăн питех те паха ĕçсем тунине палăртса, таша **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи сентяб рĕн. 29-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

„Японие çĕнтернĕшĕн" медаль тăвасси çинчен

1. Японие çĕнтернине ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас тесе, **«Японие çĕнтернĕшĕн»** ятлă медаль тăвас.

2. **«Японие çĕнтернĕшĕн»** медалĕн Положенине çирĕплетес.

3. **«Японие çĕнтернĕшĕн»** медаль мĕнле пулмалли çинчен çырса кăтартнине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕ.

„Японие çĕнтернĕшĕн" ятлă медалĕн

ПОЛОЖЕНИЙĔ

1. **«Японие çĕнтернĕшĕн»** медале çаксене парас:

а) Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи 1-мĕш, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи 2-мĕш тата Байкал леш енчи фронтсен çарĕсен составĕнче, Лăпкă океанри флотпа Амур çинчи флотилин составĕнче пулса Япони империалисчĕсене хирĕç кĕрешнĕ Хĕрлĕ Çарта, Тинĕс-Çар Флотĕнче тата НКВД çарĕсен часĕсемпе соединенийĕсенче пулнă пур çар çыннисене те тата штатри тата çĕрĕшсе ĕçлекен çынсене;

б) Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флот Халăх Комиссариачĕн тата Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн центрти управленинче ĕçлесе Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи совет çарĕсене çĕнтерӳ тума пулăшнă çар çыннисене.

2. **«Японие çĕнтернĕшĕн»** медале СССР Верховный Совет Президиумĕ ячĕпе, Японие хирĕç кĕрешнине ĕнентерсе чассен командирĕсемпе тата çарти сыватмалли учрежденисен начальникĕсем панă документсем тăрăх параççĕ.

Медале çаксем параççĕ: Хĕрлĕ Çăран, Тинĕс-Çар Флочĕн тата НКВД çарĕсен часĕсенче тăракан çынсене—çар часĕсен командирĕсем; çартан, флотран, тата НКВД çарĕсенчен кайнă çынсене—медаль илме тивĕçлĕ çын пурăнакан облаçри, хулари тата районри çар комиссарĕсем.

3. **«Японие çĕнтернĕшĕн»** медале кăçăр çине çулахай енне çакса çӳремелле. Урăх орденсемпе медальсем пулсан, ку медале «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй аслă вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн» медаль хыççăн çакмалла.

«ЯПОНИЕ ÇĔНТЕРНĔШĔН» МЕДАЛЬ МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИ ÇИНЧЕН СЫРСА КĂТАРТНИ

Медале йĕсрен диаметрпа шутласан 32 миллиметр сарлакăш çаврака тăваççĕ.

Медалĕн пичĕ енче—Совет Союзĕн Генералиссимусĕн И. В. Сталин юлташăн ăнне ӳкерсе кăтартнă.

Медалĕн çӳлти пайĕнче çаврака тăрăх çапла çырнă: «Японие çĕнтернĕшĕн».

Медалĕн тепĕр енче—«1945 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕ» тесе çырнă. ун тавра çаврăх тĕсле ансăр йĕрсем пулаççĕ.

Медаль çинчи ӳкерчĕксемпе çырнисем саспаллийĕсем мăкăрлăк пулаççĕ.

Медаль ункă урлă пилĕк кĕтеслĕ колодкăпа пĕрлетсе тăрать. Тимĕрне 24 миллиметр сарлакăш муаровай хăюпа сарнă. Хăю варринче—сарлака хĕрлĕ йĕр, унăн икĕ енче вара пĕрер шурă тата тепĕр хĕрлĕ йĕр, чи хĕрринче пĕрер ансăр шурă йĕр пулать. Хăю пĕрлетмелле çаврăх тĕсле ансăр йĕрсем пулаççĕ.

Коммунистла воспитани ĕçĕн аслă программи

(В. И. Ленин „Çамрăксен союзĕсен задачисем" çинчен тухса каланăранпа 25 çул тултарнă тĕле)

Сирĕм пилĕк çул каярах, 1920 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче, комсомолăн III-мĕш съезчĕн трибуни умĕнче Владимир Ильич Ленин çамрăксен союзĕсен задачисем çинчен хăйĕн историллĕ сăмахне тухса калама.

Унчухне кăнтăрта çапăçусем пынă-ха, патша влаçĕпе буржуаллă вăхăтлăх правительство хуçаланнине пула, вăрçа пула тата империалистла интервентсем тапăннине пула, çĕршыв ишĕлсе пĕтнĕ, чухăнланса юлнă тата выçă аптăранă пулнă. Ленин çав вăхăтрах революциллĕ çамрăксен представителĕсемпе коммунизм обществине тăвасси çинчен калаçнă.

Çав сăмах вăл пирĕн вăхăта та, ăна ĕнер тухса калама пекех илтĕнсе тăрать. Сакăнта ĕнтĕ Ленинăн малашнехине геннилле курма пĕлнин вăйĕ. Ленин комсомолăн III-мĕш съездĕнчи хăйĕн сăмахĕнче палăртса хунă программăн—çамрăксене коммунистла вĕрентсе çитĕнтермелли программăн теорине практикăри аслă пĕлтерĕшлĕ халĕ пирĕн умра татах та анлăрах çутăлса тăрать. Ленинăн куçĕ историллĕ çав тери пысăк тапхăра—çĕнĕ обществăлла стройăн малтанхи утăмĕсенчен пуçласа татăклăн çĕнтерсе чапа тухасси патне çитиччен—курса тăнă.

Марксизм çĕнĕ этем революциллĕ практикăра, классен кĕрешĕвĕнче вĕрентсе, пиçĕхсе пыни çинчен вĕрентет. Çав революциллĕ практикăра, классен çав кĕрешĕвĕнче пролетариат, хăй капиталистла обществăн пылчăкĕпе пăсташĕнчен тата çав обществăн харăпăрлăх моралĕнчен тасалса пырса, пĕтĕм халăха вĕрентсе çитĕтерекенни пулса тăрать. Маркспа Энгельс çинсене çĕнĕлле шăратса çитĕнтермелли, вĕсен ăнланулăхне урăхлатса йĕркелемелли, çинсем хăйсене тытăкаламалли çĕнĕ нормăсем, хăнăхусем, шухăш-кăмăлăн çĕнĕ тĕрекĕсем çуралмалли аслă процесс конкретлăн мĕнле пулса пырассине кăтартса пама пултарайман-ха. Социализмлă революцин çав чи кăткăс ыйтăвĕ çине историллĕ çĕнĕ условисенче Ленинпа Сталин ответ панăç.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Ленин сăмахĕн пĕлтерĕшĕ комсомол ĕçĕн—çамрăксене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçĕн картинчен нумай анлăнрах сарăлать. Сакă вăл большевиксен партийĕн мĕнпур халăха, пуринчен малтан çитĕнекен ăрăва, пĕтĕмпех совет стройĕн условийĕсенче çитĕнекен ăрăва, коммунистла воспитани памалли программăллă довуменчĕ пулса тăрать.

Ленин хăйĕн сăмахне капитализм стройне революцилле аркатас ĕç пынă чи хĕрӳллĕ тапхăрта тухса калана. «Киввине çĕмĕрсе тăкнă, ăна çавăн пек çĕмĕрсе тăкмалла пулнă та, вăл ĕнтĕ халĕ ишĕлчĕк купи пулса тăнă, ăна çавăн пек ишĕлчĕк купи туса хумалла пулнă та. Тăприне тасатса хунă, çак тăпра çинче вара коммунистла çамрăк ăрăвăн коммунизм обществине тумалла», теннĕ Владимир Ильич.

Çав обществăна тума пысăк ăнланулăхлă, вĕрennĕ çынсем кирлĕ, хуçалăхăн çав тери пысăк организмине ку чухнехи наукăна малта пыракан техника çине таниса тытса пыма пултаракан организаторсем кирлĕ пулнă.

Ирĕксĕр ĕçлессине хăвăн ĕçлессине улăштарасси, пĕтĕм государствăн улăпла масштабĕпе план тăрăх организациленĕ ĕçпе улăштарасси, теннĕ Ленин, ĕç çине тата обществăлла харăпăрлăх çине çĕнĕлле пăхма, обществăлла çĕнĕ хăнăхусемпе çĕнĕ йăласем туянма хушать. Ленин ылханлă правила тесе ят панă правилăна—«кашни — хăйĕн, пĕр турă кăна—пуриншĕн те» текен правилăна тытса пыракан буржуаллă обществăри индивидуализм вырăнне, харампырăхна эгоизм вырăнне çĕнĕ туйăм — государство, коллективизм, тачă туслăх туйăмĕ йышăнмалла.

Çак паха енсене пурне те обществăлла çĕнĕ строй тунă çĕрте хăнăхтарса пымалла пулнă. Çапла ĕнтĕ çынсене коммунистла вĕрентсе çитĕнтересси коммунизмшăн кĕрешес тĕп ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Ленинпа Сталин çынсене вĕрентсе воспитани парас ĕç çине яланах çав тери тимлĕн çавăрнса пăхнă, çав ĕçе яланах социализм строительствин задачисемпе сыхăнтарса пынă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Ленинпа Сталин çынсене вĕрентес ĕçĕн пĕлтерĕшпе, интеллигенцин совет обществинчи вырăнне пĕчĕклетме пăхнине хирĕç те, çавăн пекех çамрăксене вĕрентсе воспитани парас ĕçе пурнăçран, классен кĕрешĕвĕнчен уйăрма пăхнине хирĕç те, пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пынă.

Ленин хăйĕн историллĕ сăмахне каланăранпа иртнĕ çирĕм пилĕк çул пирĕн парти Ленинăн коммунистла воспитани памалли программине куллен çине тăрса, çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынипе паларса тăрать. Сталин юлташ Ленинăн коммунистла воспитани çинчен калакан вĕрентĕвне малалла аталантарса пынă, социализм строительствин условийĕсенче массăсене вĕрентсе воспитани панин опытне теори тĕлĕшĕнчен пĕтĕçтерсе тăнă.

Большевиксен партийĕ тарăшнипе пирĕн çĕршывра воспитани ĕçĕ çав тери анлăн сарăлса кайнă. Парти çамрăксене анлăн вĕрентсе çитĕнтерессишĕн, вĕсене техникăна вĕрентессишĕн, çамрăк ăрăва марксистла-ленинла вĕрентсе хатĕрлессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тарăшнă, тарăшать те. Парти çамрăксене çĕршыва индустриализацилессишĕн, яла социализмла урăхлатса йĕркелессишĕн, классăр общество туса хурассишĕн пыракан практикăллă кĕрешӳре вĕрентсе çитĕнтерет. Парти çамрăксене йывăрлăхсене хирĕç хăюллăн малалла утма, çав йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма вĕрентет. Çав хăйр та йывăр кĕрешӳре парти çамрăксене, пĕтĕм халăха вĕрентнĕ пекех, шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен çирĕп те таса пулма вĕрентсе, хăнăхтарса пырать.

Парти тата Сталин юлташ хăй çамрăк ăрăва вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе туса иртнĕрнĕ çав аслă ĕçĕн результатăçсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче уйрăмах вăйлăн паларчĕç. Вăрçа совет государствин вăйĕпе çирĕплĕхне çав вăхăтрах çĕнĕ совет çыннине те, унăн ӳт-пӳпе шухăш-кăмăл пахалăхне, çирĕплĕхне пысăк тĕрĕслӳ витĕр кăларчĕ. Совет çынни çав тĕрĕслĕве чыслăн тӳссе иртнĕ. Пирĕн çĕнтерӳ вăл—социализм стройĕн çĕнтерĕвĕ, совет идеологийĕн, совет шухăш-кăмăлĕн, советла воспитани системин çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

Хăйĕн историллĕ çулĕн мĕнпур тапхăрĕнче комсомол совет çамрăкĕсене коммунистла вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре партин шанчăклă помощникĕ пулса тăнă. Комсомол хăйĕн воспитани ĕçĕнче сахал мар çитĕнӳсем турĕ. Комсомол тата çамрăксем социализм строительствине активлăн хутшăнса ĕçленине, Совет çĕршывĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн тата унăн чапĕшĕн вăя хĕрхенмесĕр кĕрешнине партипе правительство пысăка хурса хакларĕç, çавăншăн халăх пирĕн комсомола юратать те ĕнтĕ. Комсомолăн çитĕнĕвĕсем, унăн халăхпа тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсем, пуринчен малтан, комсомола Ленинпа Сталин ертсе пынин результачĕсем пулса тăрассĕ. Çамрăксен коммунистла союзĕн сăпки умĕнче аслă Ленин тăнă. Аслă Сталин комсомола пăхса çитĕнтернĕ, вăл ăна çĕнтерӳсен çулĕпе малалла ертсе пырать.

Пирĕн государство хăй аталанăвĕн çĕнĕ тапхăрне—вăрçă хыççăнхи... мирлĕ строительство тапхăрне кĕчĕ. Комсомолăн задачи — партие çĕнĕ задачăсене татса парас ĕçре пулăшасси, çамрăк патриотсен вăйне аслă çĕнтерӳсене çирĕплетсе хăварма çĕклесси, хамăрăн социализмлă Тăван çĕршывăн вăрçăна экономика хăватне малалла тĕреклетсе пыма кĕрешӳве çĕклесси пулса тăрать.

Халĕ çĕнĕ пилĕкçуллăх планне—нимĕçсем аркатса хăварнă районсенчи хуçалăха пĕтĕмпех юсаса ура çине тăратмалли, СССР Союзĕн мĕнпур халăх хуçалăхне малалла аталантармалли плана палăртса хурас ĕç пырать. Сывăх çулсенчех совет халăхĕ вăрçă кӳнĕ сурансене тӳрлетсе çитерет кăна мар, çакăнпа пĕрлех вал тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвать. Строительствăн çав аслă планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре совет çамрăкĕсем палламăр вырăн йышăнма тивĕçлĕ. Пирĕн çĕршыври çамрăксем пысăк вăй пулса тăрассĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçленинчен социализм строительствинче ăнăçусем тăвасси нумай килет. Пирĕн çĕршыври çамрăксем умĕнче, ют çĕршывсенчи çамрăксем умĕнче ăнă пек, шиклентерекен ыйту—вĕсем хăйсен вăйĕпе пĕлĕвĕсене ăста вырнаçтарас ыйту тăмасть. Пирĕн çĕршывра пуриншĕн те социализмлă Тăван çĕршыв ырлăхне усă кӳрсе пултарулăн ĕçлеме вĕçĕ-хĕррисĕр майсем пур. Çĕршыв çамрăксене вĕсене ертсе пыракан ленинла-сталинла комсомола паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума, коммунизм строительствин хастарлăхпе хавхаланса ĕçлеме хушать. Анчах умра тăракан ĕçсем çамрăк строительсене ĕçре хастар пулма кăна мар хушаççĕ. Çав ĕçсем çамрăксенчен пысăк пĕлӳлĕх, пысăк культурăлăх ыйтаççĕ. Совет государстви умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама пысăк квалификацилле, анлă тавракурăмлă, культура тĕлĕшĕнчен нумай енлĕ вĕрентсе аталаннă мĕнпур тĕрлĕ профессисен работникĕсем çав тери йышлă кирлĕ. Тăваттăмĕш пилĕкçуллăх палăртакан строительствăн анлă планне çавăн пек кадрсем кăна пурнăçа кĕртме пултараççĕ.

Совет власăн çулĕсенче пирĕн мĕнпур çамрăксем хут пĕлекен çынсем пулса çитĕç, вĕсен çав тери пысăк йышĕн ватам пĕлӳ пур. Нумайĕшĕсем аслă шкулсенчен вĕрентсе тухрĕç. Вăрçа вăхăтĕнче çамрăксем пурте тенĕ пекех çĕнĕ профессисем, техникăлла квалификаци туянчĕç. Çакă, паллах ĕнтĕ социализм строительствин задачисене чылай çăмăллатать. Анчах вăрçă çамрăксен чылай пысăк йышне шкултан уйăрчĕ, нумайĕшне вĕрентсе пĕтерме чăрмантарчĕ. Çавăнпа та Совет правительстви çамрăк рабочисемпе колхозниксем валли каçхи шкулсем йышлăн уçса начĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче çав шкулсенче 1300 пин çамрăк çын производствăран татăлмасăрах вĕренме сытăнмалла.

Çапах та пирĕн вĕренĕве явăçтарман çамрăксем те чылай-ха, шкулсене çӳреме пăрахакансем пур. Çак ялалана ĕнтĕ ниепле те çырлахса ларма юрамасть.

Çамрăксене вĕрентес ыйтусем халĕ комсомол ĕçĕн тĕп ыйтăвĕсем пулса тăраççĕ. Сталин юлташ пире: ĕç тухăçлăхне ӳстермелли татăклă май рабочи класа культурăпа техника тĕлĕнчен ӳстересси пулса тăрать, тесе вĕрентет. Акă мĕншĕн ĕнтĕ çамрăк рабочисене пĕлӳ парасси тата вĕсене техникăна вĕрентесси государство ĕçĕ пулса тăрать, çакă вăл комсомол организацийĕсене ку ĕçе куллен тимлĕн пăхса тăма хушать. Комсомол организацийĕсем ĕçпе вĕренĕве сыхăнтарса пыракан кашни çамрăк рабочие колхозникшĕн тимлĕн тарăшма тивĕçлĕ. Çакă вăл çамрăк рабочине колхозникĕн хăйĕн ĕçĕ кăна мар, пĕтĕм комсомол ĕçĕ те пулса тăрать. Комсомол организацийĕсен çамрăксене системăллă тата çирĕп пĕлӳ паракан шкула мĕнпур вăйпа пулăшса тăмалла. Çамрăксен пур тĕрлĕ вĕренĕвне те—вăтам шкулсене, рабочисемпе хресчен çамрăкĕсен каçхи шкулĕсене, техникумсемпе аслă шкулсене, производствăллă вĕрентĕвĕн тĕрлĕ формисене, заочнăй йĕркепе вĕренессине тата харăпăрлăй тĕллĕн вĕренессине тимлĕн сăнаса тăмалла.

Тăтăшах вĕренсе пымалла, пурнăç тарăшăпех вĕренмелле,—çапла хушать пирĕн обществăллă строй. Пĕтĕм ĕç татăк-сыпписĕр аталану çинче, тăтăшах малалла кайса пыни çинче, экономика, наука, техника тăтăшах çĕнелсе пыни çинче никĕсленсе тăракан государствăра кучухнехи наукăна теорипе практика тĕлĕшĕнчен вĕренсе алла илнĕ кадрсем, революциллĕ теорин никĕсĕсене вĕренсе алла илнĕ кадрсем, кучухнехи событисене, вĕсен пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕсене ăнланма пултаракан кадрсем кăна ĕçе ăнăçлă туса пыма пултараççĕ. Мĕнпур комсомол организацийĕсем комсомол кадрĕсене марксистла-ленинла вĕрентсе хатĕрлессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тарăнма тивĕçлĕ.

Ленинпа Сталин çамрăксене яланах çакăн çинчен асăрхаттарса тăнă: вĕренесси вăл—пурнăçран татăлассине, шкул хупни ăшне пытанса ларассине пĕлтермест. Пурнăçпа унăн опычĕ, пурнăç урокĕсем, пурнăçри примерсемпе практикăллă хăнăхусем çамрăксен вĕренӳ процесне çирĕп кĕрсе вырнаçмалла. Çавна тăвас тесен вĕренӳ пурнăç практикинчен уйăрлса тăнине пĕтĕмпех пĕтермелле. Пирĕн çамрăксем наука никĕсĕсене çирĕп вĕренсе алла илсе пыни, шкул çамрăк ăрăвăн пултарулăхпа тавçăрулăх шухăмĕсене хускатса пыни кирлĕ.

Çамрăксене Ленин пек, Сталин пек вĕрентсе пырса, пирĕн вĕсене кирек мĕнлĕ ĕç çине те, чи пĕчĕк ĕç çине те голсудство енчен пăхма вĕрентмелле, социализмлă стройăн никĕсĕ пулса тăракан обществăллă харăпăрлăха перекетлĕн пăхса усрама хăнăхтармалла. Комсомолăн малтанхи пекех социализмлă ăмăртăва ертсе пымалла, çамрăксен пĕтĕм йышне ăмăртăва явăстармалла. Пирĕн тĕллев — кашни çамрăк рабочие, колхозника пĕтĕм совет çамрăкĕсене пĕтĕм çĕршывăн малалла аталанмалли çулĕрне уçăмлăн курса тăмалла тăвасси, çапла вара вĕсене хăйсен ĕçĕн, вĕренĕвĕн тата хăйсен пĕтĕм пурнăçĕн малашнехи çулĕрне палăртса хумалла тăвасси пулса тăрать.

Ленин комсомолĕпе çапла калана: «Миллионшар строитель хушшинче эпир коммунизм обществин пĕрремĕш строителĕсем пулса тăма тивĕçлĕ, кашни çамрăк сыпи, кашни çамрăк хĕрача çавăн пек строитель пулса тăма тивĕçлĕ», теннĕ.

Сталин юлташ комсомолĕпе яланах малалла утма вĕрентет. Пур çĕрте те, государствăн кирек мĕнле задачине пурнăçа кĕртнĕ çĕрте те яланах партин пĕрремĕш помощникĕ пуласси—çапла ĕнтĕ комсомолăн лозунгĕ.

О. ШИЦАКОВА.
ВЛКСМ Центральный Комитетăн Секретарĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калана:

«Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕ икĕ лару туса иртternĕ. Ирхи ларура В. М. Молотов председатель пулнă, каçхи ларура—Ван Ши-пзе.

Икĕ ларăвĕнче те Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕн хальхи сессийĕсен протоколĕсене пăхнă.

Çитес лару сентябрĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен виçĕ секретарь пулмалла».

ПĔРЛЕШНЕ НАЦИСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔН ХАТĔРЛӲ КОМИССИЙĔН ЕÇ ТĂВАКАН КОМИТЕЧĔ ПЕЛТЕРНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 28-мĕшĕнче каçхине Лондонра пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла калана: пĕр ĕрне хушши тăхтанă хыççăн сентябрĕн 28-мĕшĕнче Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Хатĕрлӳ комиссийĕн Ес тăвакан комитечĕ Лондонра çĕнĕрен лару туса иртternĕ. Ларăва Громыко председатель пулса ертсе пынă. Ларура Вашингтонран пынĕ пĕлтерĕве вуланă. Унта çапла калана: ку тăранчăн законлă йĕркепе 26 государство Пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăннă, çав государствăсенчен 7-шĕ устава йышăнни çинчен калакан грамотăсене Вашингтона тăратнă та ĕнтĕ. Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕ Америкăри пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çавăн пек 26 грамота пынĕ хыççăн ĕçлеме тытăнать.

Иртнĕ ĕрне хушшинче Ес тăвакан комитет ятарласа туса хунă тĕрлĕрен комитетсем, сăмахран, хăрушсăрлăх комитечĕ, экономика комитечĕ, социальнăй комитет тата ытти сем те, туса иртternĕлли каласусене сăмахăн хăвăртлатнă, хăшпĕр ыйтусем тăрăх çав каласусем пĕтнĕ те ĕнтĕ. Халĕ çак комитетсем Ес тăвакан комитета хăйсен ĕçĕсем епле пыни çинчен вăхăтăн-вăхăтăн пĕлтермелли пĕрремĕш отчетсене тăратнă. Ес тăвакан комитет çав отчетсене Ес тăвакан комитета хăйсен представителĕсене яман Пĕрлешнĕ нацисен членĕсене пурне те телеграф тăрăх яма йышăннă.

Хатĕрлӳ комиссийĕпе генеральнăй ассамблея хушшинче ĕçе епле уйăрмалли çинчен калĕшнĕ.

Кунсăр пуçне, Ес тăвакан комитет хатĕрлӳ комиссийĕне организацилес телĕпне пулнă ытти сĕнӳсене те пăхса тухнă.

Пĕрлешнĕ нацисен уставне йышăнни çинчен Вашингтона грамотăсем тăратнă çĕршывсем çаксем: Аргентина. Бразили. Доминикан республики. Франци. Çĕнĕ Зеланди. Никарагуа тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем.

СОВЕТ ÇАРĔСЕНЕ МАНЬЧЖУРИРЕН ИЛСЕ ТУХМА ТЫТАННА

ЧАНЧУНЬ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Совет çарĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх совет çарĕсене Маньчжурирен пĕчĕккĕн илсе тухма пуçланă ĕнтĕ темиçе кун та çитет. Тĕп вăйсене октябрь уйăхĕн иккĕмĕш çурринче кăларма пуçласçĕ. Маньчжурирен совет çарĕсене пĕтĕмĕшпех кăçалхи ноябрь уйăхĕ пĕтнĕ çĕрелле кăларса пĕтереççĕ. Совет çарĕсене кăларассине Малиновский Маршал контроллесе тăрать, çакăн çинчен Китай çарĕсен командованине пĕлтернĕ.

ТРИЕСТРИ ПĔТĔМĔШЛЕ ЗАБАСТОВКА

БЕЛГРАД, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Триестра, Горицăра, Пулăра тата ытти хуласенче те пуçланса кайнă пĕтĕмĕшле забастовкăна промышленноçпа хула хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенчи ĕçлекенсем хутшăннă. Мĕнпур обществăлла тата уйăрăм предприятисенчи рабочисемпе чиновниксем те ĕçе пăрахса забастовкăна хутшăннă. Триест портĕнче ĕç пачах чарăнса ларнă, пур складсене те хупнă. Пĕтĕм промышленность, банксем, страховой обществăсем, ресторансем, гостиницăсем, строительнăй предприятисем, парикмахерскисем, хула транспорчĕ пурте ĕçе пăрахнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, 200.000 çын забастовка тăвать.

Забастовка тăвакансене хресченсем вăйлă пулăшаççĕ. Вĕсем забастовка тăвакансене апат-çимĕç йӳнĕ хакпа тăратма пулнă. Пулă тытакансем те забастовка тăвакансене йӳнĕ хакпа пулă тăратма пулнă. Забастовка тăвакансене апат-çимĕç парса тăрас тĕлĕшпе ятарласа тунă комисси ĕçлеме тытăннă. Çав комисси ачасене тата забастовка тăвакансен çемьисене сĕт, пахчасимĕç парса тăрас ĕçе организациленĕ. Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Триестра пулă тытакансем забастовка тăвакансене пĕрремĕш хут пулă илсе пырса панă.

Триест патĕнчи Миле хулинче те пĕтĕмĕшле забастовка пырать. Союзниксен çар влаçĕсем забастовкăна ертсе пыракан комитетран чиновниксене ĕçлемешкĕн ирĕк пама ыйтнă. Профсоюз организацийĕсем ку ыйтупа килĕшмен.

Забастовка йĕркелĕ пырать, тавлашу хирĕçӳ çук. Триестра акăлчансен хĕçпăшалăй салтакĕсем урамсем тăрăх хуралласа çӳреççĕ. Союзниксен çар влаçĕсем профсоюзсен тата политика организацийĕсен представителĕсемпе тата предпринимательсемпе калаçу пуçласа янă.

Забастовка тăвакан çынсен организацийĕсен представителĕсем çапла калана: забастовка ĕççыннисене пурне те ĕç тупса париччен тата ĕççыннисене пурăнма сителĕклĕ ĕç укçи париччен пырать, теннĕ. Сентябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне Триестра 15.882 çын ĕç тупаймасăр пурăннă. Çитес ĕрнере судăйсем тăвакан верьфрен тата 3.530 рабочие кăларса яма палăртнă пулнă. Çапла пĕлтереççĕ: Триест портĕнчи судăйсем çинче ĕçлекен американец морякĕсен профсоюз организацийĕсем забастовка тăвакансемпе пĕр кăмăллă пулни çинчен пĕлтернĕ.

АМЕРИКĂРИ СЛОВЕНСЕН СОВЕЧĔ БИРМСА ЯНĂ СЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри словенсен наци советĕн секретарĕ Кухель хаçат представителĕсене çапла калана: Америкăри 250 пин словена пĕрлештерсе тăракан совет Лондон хулине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарьне Бирмса çыру янă. Унта çапла калана:

«Лондонра 1915 çулта тунă договор словени халăхĕ тĕлĕшпе тĕрĕс мар туннине халĕ тӳрлетес пулать. Италире пурăнакан 650 пин югослава хăйсем пин çул хушши пурăнакан мĕнпур çĕрĕсемпе пĕрле хăйсен тăван Югославийĕне пĕрлештермелле. Эпир фашизмпа империализм жертвисене Югославипе пĕрлешме ирĕк пама ыйтатпăр. Венеци — Джулири тата Триестри югославсене тискеррĕн тыткаласа. Итали этеме теллессин мĕнпур законĕсене пăсрĕ. Венеци—Джулие, Триеста тата Сочăран хĕвелтухăçнерехри территорине Югославие тивĕçлипе тавăрса памалла».

АФИНЫ ХУЛИНЧЕ ГРЕЦИРИ ИРĔКЛĔХ ЮХАМĔ ТĂВАТА ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ УЯВЛАНИ

АФИНЫ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Халăхăн ирĕклĕх фронтне тунăранпа тăватă çул тултарнине Афины хулинче халăх праçникне уявланă пек уявласа иртternĕ.

Митинг пуçланиччен нумай малтанах праçникри пек тумланнă халăх 80 пин çын вырăнаçакан стадион трибуннисене çеç мар, стадионăн пĕтĕм хирне тата унпа юнашарти площадь те пĕтĕмпех йышăннă. Вăрçă ветеранĕсене тата тăшмана хирĕç тăнă чаплă ĕçсенсене, çавăн пекех тата ирĕклĕх фронтĕнчи партисен лидерĕсене халăх хĕрӳллĕн саламланă. Коммунистсен партийĕн руководителĕ Захариадис Грецине гитлерла Германири тĕрмесенче 9 çул асапланса пурăннă хыççăн Афинăпа Пирейри халăх умне пĕрремĕш хут пырса тăнă, ăна халăх пĕтĕм стадион урлах алăпа çĕклесе каçарнă.

Козани Иоаким епископа регент тăшмана хирĕç вăрçа вилнĕ çынсем пирки панихида тума чарнă пулнă. Çав епископ халăх демократийĕ кĕрешӳре пĕтĕмпех çĕнтерӳллĕ пулăшу кӳнĕшĕн çĕр мар, стадионăн пĕтĕм хирне тата унпа юнашарти площадь те пĕтĕмпех йышăннă. Вăрçă ветеранĕсене тата тăшмана хирĕç тăнă чаплă ĕçсенсене, çавăн пекех тата ирĕклĕх фронтĕнчи партисен лидерĕсене халăх хĕрӳллĕн саламланă. Коммунистсен партийĕн руководителĕ Захариадис Грецине гитлерла Германири тĕрмесенче 9 çул асапланса пурăннă хыççăн Афинăпа Пирейри халăх умне пĕрремĕш хут пырса тăнă, ăна халăх пĕтĕм стадион урлах алăпа çĕклесе каçарнă.

Митингра юлашкинчен тăшманпа çапăçса вилнĕ çынсене асăнас шутпа пĕр минут хушши шăп тăнă, ун хыççăн хурлăхлă юрă юрланă.

ГРЕЦИРИ СУЙЛАВСЕМ УМĔН

АФИНЫ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хулинче суйлавсен вăхăтне официальнăй йĕркепе пĕлтерессе кĕтессĕ. Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, суйлавсене декабрь уйăхĕн варринче ирттермелле тăваççĕ, суйлавсен йĕркине монархистсем пысăк йышпа пĕлсе пынă пек, либералсен партийĕ суйлавсене хутшăнмасть, теннĕ.

ВЕСТ-ИНДИ ХАЛАХĔ ЫЙТНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Барбадос утравĕ çинчи Бриджтаун хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 29-мĕшĕнче унта пĕтĕм Вест-Индири ĕç конгресĕ хăйĕн ĕçне пĕтернĕ. Конгресе Англие яма делегаци суйланă. Çав делегаци Англи правительствине Вест-Инди федерацине туса хурса, унта халăхăн хăйĕн управленине тăвасси çинчен ыйту тăратмалла.

Британи Вест-Индине çак утравсем кĕреççĕ: Багам. Барбадос. Подветренные. Наветренные тата Ямайка утравĕ. Çав утравсен кашни ушкăнĕн хăйĕн губернаторĕ пур тата законсем кăларакан вырайти органсем пур, вĕсене Англин колони министерстви контроллее тăрать.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛЕ ШТАТСЕНЧЕ ПУРĂНАКАН АРМЯНСЕН ТĔН ОРГАНИЗАЦИЙĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Америкăри армянсен евангели союзĕ» Америкăра пуллă организацин пулса тăрать. Çав организацин Род Айленд штатĕнчи Провиденс хулинче пуху туса иртternĕ. Пухура халĕ Лондонра ĕçлекен Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне ямалли çырăва йышăннă.

Çырура çапла калана: «Эпир, Америкăри армянсен евангели союзĕн священникĕсем, ятарласа пухнă ларăла килтĕмĕр. Эпир Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕнчен тĕрĕслĕхпе атемлĕх ячĕпе армян халăхĕн жалобине пăхса тухма ыйтатпăр. Армян халăхĕ темиçе çĕр çул хушши туроксен юнăн пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăнать. Армян халăхĕ хăй вăхăтĕнче аслă та пултаруллă халăх пулнă, вăл пивилизацине христианство идейисемпĕн чаплă ĕçсем тунă. Анчах та юлашки 50 çул хушшинче вăл халăха туроксем тĕрлĕ майпа пĕтерсе пыраççĕ. Вĕсем армянсене йышлăн вĕлереççĕ, тăваллса кăлараççĕ, кая хурса мăшкăлласçĕ, вĕсен пурлăхне законсăр турта-турта илеççĕ. Пирĕн халăхăн иртнĕ тĕнчери вăрçă хыççăн чĕррĕн тăрса юлнă çынсенсем, туроксем çавăн пек политика тытса пынă пирки, тĕнчери пур çĕршывсене те саланса пĕтнĕ. Эпир çине тăрсах çапла тума ыйтатпăр: çав армянсене пулăшăр, вĕсене хăйсен Турцири ĕмĕрхи çĕрĕсем çине куçса ларма май парăр, вара çав çĕрсене ирĕклĕхпе хăрушсăрлăхра пурăнакан Армянсен Совет Республикипе пĕрлештерĕр».

Çак чĕнĕве евангели союзĕн секретарĕ Георгиян тата пуху председателĕ Эриазян алă пуснă.

ВЕНГРИ МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

БУДАПЕШТ сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри министрĕсен советĕн ларăвĕ пулса иртнĕ.

Финанс министрĕ сĕннĕ тăрăх, государство служащийĕсене ĕç укçи тата пенси 50 процент ӳстерсе пама йышăннă. Промышленность министрĕ сĕннĕ тăрăх, коллективлă договорсенче кăтартнă ĕç укçине рабочисене те 50 процент ӳстерсе пама йышăннă.

Венгрире çĕр реформине иртternĕ май ют государство çыннисен çĕрĕсене Венгри хресченĕсене валеçсе пама пирки вĕсене çав сиеншĕн сапламалла, тесе йышăннă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛЕ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧЕ ВЕНГРИПЕ СЫХАНСА ТАРАС ЕÇЕ ВАЙЛАТСА ЯРАССИ ÇИНЧЕН ПЕЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Венгрипе сыхăнса тăрас ĕçе вăйлатма йышăннă, мĕншĕн тесен Венгрин вăхăтлăх правительстви хăйĕн ĕçĕсене туса тăнă чухне халăхăн тĕрлĕ енлĕ интересĕсене шута илса тăма пултарать, тесе шутлаççĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсенче.

ТРУМЭН КИТАЙ ХАЙĔН ПРЕДСТАВИТЕЛЬНЕ ЯРАТЬ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Трумэн президент Китая хăйĕн представительне Локк господина ярать. Вăл унта Чан Кай-ши Генералиссимуспа тата Китай правительствин ертсе пыракан ытти представителĕсемпе тĕл пулса калаçмалла. Çав калаçусем Китая экономика тĕлĕшпе çĕнетесси çинчен пулса иртмелле.

ПАТТОН ФРАНКФУРТ ХУЛИНЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Паттон генерал-лейтенант Эйзенхауэр генерах чĕннипе сентябрĕн 28-мĕшĕнче хăйĕн штабĕнчен Франкфурт хулине тухса кайнă. Эйзенхауэр Паттон генерала вăл Баварире гитлеровецсене аслă вырăнсенчен ытла майĕпен кăларнă пирки калаçма чĕннĕ. Паттонпа пĕрле Франкфурта çар администрацийĕн аслă офицерĕсем те кайнă.

КĔСКЕН

▲ Мексика хăйĕн наципаллĕ никама пăхăнманлăхĕ 135 çул тултарнине палăртнă. Çав уяв Пĕрлешнĕ нацисем татăлăнах çĕнтернĕ вăхăтра пулнă пирки, уйăрмах хаваслă иртнĕ. (ТАСС).

Н. И. АШМАРИН ПРОФЕССОР СУРАЛНИ 75 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМĔН

Кăçалхи октябрĕн 5-мĕшĕнче Н. И. Ашмарин профессор çуралнăн 75 çул тултарать. Çавна май октябрĕн 7-мĕшĕнче Чăвашсен чĕлхепе литературăпа тата историпе аслăлăх институчĕ пуху туса иртternĕ. Пухура Н. И. Ашмарин профессорăн ĕçĕпе пурнăçĕ çинчен В. Г. Егоровпа А. И. Иванов докладсем туса параççĕ.

АСЛĂ УЯВĂН ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă май пулса иртнĕ чăваш халăхĕн аслă уявĕн итогĕсемпе материалĕсене пĕр çĕре пухса пĕтĕçтерес шутпа, Чăвашгосиздат уйăрăм кĕп